З.В.Петрова

# ЭЙДОС-КОНСПЕКТ – КРИТИКĂЛЛĂ ТĔПЧЕВ ТЕХНОЛОГИЙĔН ПĔР МЕЛĔ

В статье представлен опыт работы по активизации познавательных интересов на уроках литературы с помощью приема эйдос-конспект

**Тĕп самахсем:** эйдос-конспект, ӳкерчĕклĕ эйдос-конспект, графикăллă эйдос-конспект, шухăша тĕспе палăртса тунă эйдос-конспект, ассоциациллĕ эйдос-конспект, цифрăллă эйдос-конспект

**Ключевые слова:** эйдос-конспект, художественный эйдос-конспект, графический эйдос-конспект, цветовой эйдос-конспект, ассоциативный эйдос-конспект, цифровой эйдос-конспект

Литература пĕлĕвне алла илесси, ачасене илемлĕ вулава хăнăхтарасси вулав культурин шайĕ ӳснĕçем пулса пымалла. Хайлавсемпе паллашнă май вĕренекенсен сăнар характерне, çынлăх туйăмне ăнланса илме пĕлмелле, вĕсене паянхи пурнăçпа танлаштарса хаклама вĕренмелле. Çавăнпа та литература вĕрентекенĕ умне пысăк та яваплă тĕллевсем тухса тăраççĕ.

Вĕрентӳ системинче, çав хушăра литература вĕрентĕвĕнче те, çулсерен методистсем çĕнĕ технологипе меслет хатĕрĕсем сĕнеççĕ. Вĕрентекенсем вĕсене пĕлнĕ-пултарнă таран тишкерсе алла илсе пыраççĕ, кулленхи ĕçре усă кураççĕ. Эпĕ чăваш литература урокĕсенче критикăллă тĕпчев технологийĕпе час-часах усă куратăп. Кун йышши уроксем шырав мелĕсемпе йĕркеленеççĕ. Вĕренекенсем хайлав текстне тишкернĕ май астăвăмпа шухăш ирĕклĕхне, сисĕм-туйăм пултарулăхне, харпăр хăй хальлĕн ĕçлес-тăвас туртăма вăйлатаççĕ. Шухăш юхăмне тĕрĕс йĕркелес пултарулăха çирĕплетеççĕ, аталантарма пулăшаççĕ.

***Эйдос-конспект*** – критикăллă тĕпчев технологийĕн пĕр мелĕ. Ку ăслай хайлава пĕтĕмĕшле пăхса тухнă хыççăн пĕтĕмлетӳ тума меллĕ.

Эйдос-конспект термин икĕ пайран тăрать. «Эйдос» (грек чĕлхинчи eidos) термин чăваш чĕлхинчи «сăнлăх», «ӳкерчĕк», «картина», «символ» пĕлтерĕшсене тивĕçет, «конспект» - «шухăшсене кĕскен çырса пани». Çапла вара вĕренекен хайлавпа паллашнă хыççăн хăйĕн шухăшне, хаклавне ӳкерчĕк урлă тата хăй сăнласа панă ӳкерчĕке ăнлантарса пани урлă пĕлтерет. Эйдос-конспектра усă куракан кашни сăнлăха вĕренекенĕн текстри цитатăсемпе çирĕплетсе пама пĕлмелле. Уçăмлă, илемлĕ ӳкерчĕксемпе усă курни сăмахсене тĕрĕс ăнланма пулăшать.

Эйдос-конспектăн пĕрремĕш пайне пурнăçлнă чух шухăша мĕнле сăнлăх урлă уçнине кура методистсем ăслайăн çăк тĕсĕсене палăртаççĕ:

1) ӳкерчӗклӗ эйдос-конспект (художественные);

<table>
<tr><td colspan="2">Ӗç. Трубина Мархвин «Хӑнара» калавне ӳкерчӗклӗ эйдос-конспект мелӗпе пӗтӗмлетӗр<br>1-мӗш ӗç − автор шухӑшне палӑртакан ӳкерчӗк тӑвӑр;<br>2-мӗш ӗç − пайӗнче ӳкерчӗке ӑнлантарса парӑр. Хӑвӑр шухӑша калаври текса цитатӑласа çирӗплетӗ.</td></tr>
<tr><td>1-мӗш пай<br><br><br>«Тетте» журнал ӳкерчӗкӗ тарах тунӑ иллюстраци.<br>– Санька вилӗмӗшӗн кам айӑплӑ?<br>–</td><td>2-мӗш пай<br>Санькка вилӗмӗшӗн кам айӑплӑ?<br>Ман ишутпа Санькка вилӗмӗшӗн ашшӗпе амӑшӗ кӑна мар, кукашшӗпе кукамӑшӗ, тӑванӗсем айӑплӑ. Ӗçке пула айӑпсӑр Санькка пурнӑçӗ татӑлать. «Пӳртре кичемлӗ. Ахлатнӑ, йӗнӗ сасӑсем илтӗнеççӗ…Кӗтерука амӑшӗ ӳсӗрличчен ӗçнӗшӗн йӗре-йӗре ӳпкелет. Кӗтерук чӗрене касакан сасӑпа хӑй сывлӑшне çавӑрса ярaймасӑр йӗрет…Теттийӗ (çуналлӑ лаша) акӑ халь сӗтел çинчех тӑрать. Алӑк патӗнчи вырӑн çинче Ванюк выртать. Анчах вӑл çывӑрмасть.Хупнӑ куçӗсенчен тапхӑр-тапхӑр вӗри куç çулӗ юхса анать. Хӑш чух арӑмӗ çине пӑхса илет, вара каллех куçне хупса шӑлне çыртать.» Çак сыпӑкра ача тӑванӗсем кашниех хӑйне айӑплӑ туйни курӑнать. Çемье пуласлӑхӗ пур-ши? Ман шутпа çук. Сӗтел – çемье пӗрле пуçтарӑнса лармалли вырӑн. Сӗтел çинчи лаша вара яланах ача вилӗмӗ çинчен аса илтерсе тӑрӗ.<br>Мария Константинова, 7-мӗш класс</td></tr>
</table>

2) графикӑллӑ эйдос-конспект ( схема, график, диаграмма) (графические);

**Ӗç.** Юптарӑва эйдос-конспект мелӗпе пӗтӗмлет: ӗçӗн 1-мӗш пайӗнче автор

<table>
<tr><td colspan="2">шухăшне палăртакан схема ÿкер, 2-мĕш пайĕнче схемăна ăнлантарса пар.</td></tr>
<tr><td>1-мĕш пай<br>
</td><td>2-мĕш пай<br>Усалпа ырă яланах кĕрешеççĕ. Икĕ вăй кĕрешĕвĕ çут çанталăк тĕнчинче те (Мăян – Çĕр улми аври), этем тĕнчинче те курăнать. Пуян чунлă, ырă кăмăллă, пархатарлă Çын вăйлăрах пуласса шанас килет.<br>Дарья Алексеева, 6-мĕш класс</td></tr>
</table>

3) шухăша тĕспе палăртса тунă эйдос-конспект (цветовые);
4) ассоциациллĕ эйдос-конспект (вулакан чунĕнче çуралнă символ урлă) (ассоциативные);
5) цифрăллă эйдос-конспект (компьютер пулăшнипе тунă) (цифровые).

| |
|---|
| **Ĕç.** Хайлава цифрăллă эйдос-конспект мелĕпе пĕтĕмлет: ĕçĕн 1-мĕш пайĕнче автор шухăшне палăртакан ÿкерчĕк ту, 2-мĕш пайĕнче икĕ енлĕ дневник мелĕпе «Эпир ÿссе çитнĕ чух самани пулчĕ пит тертлĕ (Ю.Скворцов «Уках хурăнĕ»)» темăна ĕнентерсе пар. |

*1-мĕш пай.*




*2-мĕш пай*

… Эпир ӳссе ҫитнĕ чух самани пулчĕ пит тертлĕ….

Ю.Скворцов «Уках хурăнĕ»

| ***Тыл ĕҫченĕсен хастарлăхĕ*** | ***Ольга, Уках, Хĕветли*** |
|---|---|
| Вăрҫă пуҫланнă хыҫҫăнхи пĕрремĕш хĕл чăвашсем СССР Патшалăх оборона комитечĕн заданийĕпе Сăр ҫинчи хӳтĕлев линине тума хастар хутшăннă. Куллен унта 85 пинтен кая мар ҫын ĕҫленĕ. Ҫак йышран 70% хĕрарамсем пулнă. Вĕсем 50 миллион кубла метра яхăн шăннă ҫĕр чавса кăларнă. | Ялти виҫĕ хĕре: Укахвие тата Укахвирен пĕр ҫул аслăрах Хĕветлипе Ольгăна – Е тăрăхне окоп чавма ăсатрĕҫ. Ҫулталăка яхăн окоп чаврĕҫ вĕсем, ҫулталăкран акă халь уйăх каярах ҫеҫ яла таврăнчĕҫ… Блиндажсем, танксене чармалли окопсем чавтарчĕҫ вĕсене – танк пынă ҫĕртен унта кĕрсе кайса каялла чаваланса тухмалла мар шăтăксем. |

| | |
|---|---|
| Ял хуҫалăхĕнче те ҫăмăл пулман. Опытлă ертўҫĕсем, кадрсем вăрҫа тухса кайнă. Трактор-машина та, лашасем те унтах ăсаннă. Ака-сухана мăйракаллă шултра выльăха кўлме пуҫланă. Ҫĕнтерĕве ҫывхартас тесе колхозниксем ĕҫҫи вăхăтĕнче талăкĕ-талăкĕпе хиртен кĕменни те пулнă. Аслисенчен шкул ачисем те юлман. | Шкулĕ ялтан тăвата ҫухрăмра. Вăрҫă пуҫлансан ялти чылай ытти ачасемпе пĕрлех Укахви те шкула ҫўреме пăрахрĕ. Пĕтĕм шкулĕпех пĕр-пĕр колхоза кайса е тырă вырнă, е ҫĕр улми кăларнă, е авăн ҫапнă. |

Эйдос-конспект мелĕпе пĕтĕмлетмелли урок ҫак тапхăрсенчен тăрать:

I. Кăсăклантарса яни. Ку тапхарти

II. Ăнланса илни.

III. Рефлекси (пĕтĕмлетў).

***1) Ачасене темăпа кăсăклантарса ярасси.***

2) ***Текста вуласа ăнланасси, ăса хывасси.*** Вăтам пусăмри ачасемпе пăхса тухакан хайлавсене урокра вуласа тухма май ҫук, ҫавăнпа та кунта вĕренекенсем хайлава килте хăй тĕллĕн вулани тĕп вырăнта тăрать. Класри тишкерў – хайлава ушкăнпа сўтсе явни, кашни вулаканăн ăсталăхне, ăнланулăхне пĕр ҫĕре пухса пĕтĕмлетни.

***3) Проблемăлла ыйтăва (аслăрах классенче – тĕпчев тĕллевне) палăртасси.*** Вăтам тата аслă классенче шухăшлаттаракан (проблемăллă) ҫивĕч ыйтусемпе ытларах ĕҫлемелле. Хурав анлă, шыравлă, нумай вариантлă чухне, пĕр хурава ыттисемпе танлаштарса хаклама май пур чухне ҫеҫ проблемăллă самант килет.

4) ***Проблемăллă ыйту ҫине хурав пама пулăшакан сăмахсене, ҫамах ҫаврăнăшĕсене, сыпăксене тупса палăртасси.*** Проблемăллă ыйту фактсен, ачасен куҫне тўрех курăнман шухăшсен юхăмне уҫма пулăшмалла. Литература тишкерĕвĕ кирек хăҫан та вĕренекенĕн чун-чĕрине, ăс-тăнне аталантармалла.

5) ***Палăртнă сăмах, сăмах майлашăвĕ, сыпăк патне сăнлăх тупса шайлаштарасси.*** Литература геройĕ урлă ҫеҫ автор шухăшне, хайлав тĕнчине кĕрсе курма пулать. Сăнар тыткаларăшĕ, туйăмĕсемпе шухăшĕсем, чăннипе суйни, ăс-хакăлĕпе чун-чĕри, сăнĕпе тумĕ, пейзаж, ҫулталăк вăхăчĕ – тем урлă та палăрать унăн харкамлăхĕ.

***6) Эйдос-конспект тăвасси.***

Ача тунă эйдос-конспект урлă эпир ҫыравҫăпа вĕренекен, вĕрентекенпе вĕренекен шухăш-кăмăлĕ еплерех ҫураҫнине сăнама пултаратпăр. Эйдос-конспект ачасене хăйсен шухăшне ăнлантарса пама, хўтĕлеме май туса парать, ҫак мелех автор калас тенĕ шухăша ачасем тавҫăрса илнипе илменнине тĕрĕслеме пулăшать.

Литература:

1. Актуальные проблемы развития национальных языков и культур народов Среднего Поволжья и Приуралья: сб. статей / Чуваш. гос. пед. ун-т; отв. ред. Т.В.Денисова. – Чебоксары: Листок, 2013.

2. Антонова З.С., Станьял В.П. Чӑваш сӑмахлӑхӗн вӗрентӳ меслечӗсем: Чӑваш шкулӗн 5-11 класӗсенче вӗрентекенсем валли. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2006.

Автор

Петрова Зоя Васильевна - учитель чувашского языка и литературы МБОУ «Напольнокотякская СОШ» Канашского района Чувашской Республики; e-mail: Petrova7601@mail.ru